44-12829

Н. Й. Шелепи

# ЫЛТĂН ҪУРКУННЕ



ЧĂВАШГОСИЗДАТ — 1944

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашская …

## ПЫЛ ХУРЧӖСЕН ЮРРИ

Ылттӑн ҫунатпа
Йӑл-йӑл курӑнса
Вӗл-вӗл вӗҫетпӗр
Колхоз садӗнче.

Ылттӑн ҫуркунне,
Чаплӑ ҫуркунне!..
Ытармалла мар
Сана, ҫуркунне!

Хитре чечексен
Пылсене ӗҫсе
Пинӗ-пинӗпе
Ҫӳретпӗр вӗҫсе.

## ВĔÇСЕ КИЛЧĔ ÇУРКУННЕ

Аслă чаплă мухтавпа
Вĕçсе килчĕ çуркунне:
Килчĕ çĕршыв юрласси
Мĕнпур чĕрчун савнасси.

Вăл колхоз хирĕсене
Пĕтĕм чунтан юратать,
Лăпка-лăпка вĕсене
Хĕл ăйхинчен вăратать.

Пирĕн савнă çĕршыва
Чĕрĕлĕх шыв ĕçтерет,
Тĕрлĕ çырла çимĕçпе
Йăвăç курăк ӳстерет.

## ШĂПЧĂК

Мухтанмастăп, вĕçместĕп
Хитре тесе сăнăмпа:
Иртен-çӳрен сынсене
Тĕлĕнтереп сăвăмпа.

Эп юрлама тытăнсан
Сар кайăк та вăтанать,
Йывăç çулçи хушшине
Тĕттĕм çĕре пытанать.

Колхоз ывăль-хĕрĕсен
Эп чăн чаплă сăвăçи;
Тинĕс хум пек хумханать
Ман сасăпа йывăççи.

## ХӖВЕЛÇАВРĂНĂШ

Эп çуркунне ырлăхпе
Часах ӳссе çитĕнеп,
Темĕн чухлĕ сип-симĕс
Çунатсемпе витĕнеп.
Сар пурçăн пек курăнса,
Ларап çилпе силленсе,
Ялан хĕвел еннелле
Савса пăхса киленсе.

## ТĂРИ ЮРРИ

Колхозниксем акара,
Эпĕ вĕсен тĕлĕнче
Ташла-ташла юрлатăп—
Чăрăлтатать çут тĕнче!
Çу шăраннă евĕрлĕ

Шăрантарап сăвăма,
Савăнтарап сассăмпа.

## ПАНУЛМИ ЧЕЧЕКĔ

Юлташăмсем, тусăмсем,
Çуркуннехи илемсем,
Çĕр çийĕнче ӳсекен
Йывăç-курăк, чечексем,
Ман çийĕме пăхăр-ха!
Пурçăн чаршав витнĕ пек
Витрĕм улма йывăçне,
Чечек айне хăвартăм
Чаплă шăпчăк сăвăçне.
Пĕтĕм колхоз сачсене
Ырă шăрша тултартăм,
Мĕнпур ачи-пăчине
Тутлă улма çитерĕп.

# ШĂНКĂРЧĂ

Кунти тăван çĕршыва
Килтĕм вĕçсе васкаса,
Çуркуннене юратса
Юрла-юрла хашкаса.

Çурт тăррине лартăм та
Шăрантартăм сăввăма,
Савăнтартăм, култартăм
Ачасене юррăмпа.

Йăпăрт-йăпăрт йăвана
Кĕре-кĕре пăхатăп,
Ăшă вырăн тумашкăн
Тĕксем, çӳçсем пухатăп.

Унта чĕпĕ кăларсан,
Йăва тăррине ларса,
Юрлап вара савăнса,
Çунат çапса, шăхăрса.

Цена 50 коп.

*Н. И. Шелепи*

# *Золотая весна*

на чувашском языке

Редактор К. Чулгась.

НТ001[illegible]1 Подписано к печати 16-VI-44г
Заказ 1113 Тираж 10000 экз.

Типография № 1 Упр. полиграфпром.
при СНК ЧАССР г. Чебоксары.